К 84.89(=Чув)
Л 25
Ч-48017

Николай
ЛАРИОНОВ-ЙЁЛМЕЛ

# Вут хӳре



Национальная библиотека ЧР
4-048017

К84.85(=4чв)
Л25

Николай ЛАРИОНОВ-ЙĔЛМЕЛ

# Вут хӳре

**Калавсем**

Художникĕ *Н.А. Васильева*



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2016

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

УДК 821.512.111-93
ББК 84 (2Рос=Чув) 6-4
Л 25

**Ларионов-Йĕлмел Н.Н.**
Л 25 Вут хӳре: калавсем / Н.Н. Ларионов-Йĕлмел. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2016. — 31 с.
ISBN 978-5-7670-2418-6

Кĕнекери геройсем, ытти ачасем пекех, лара-тăра пĕлмеççĕ, выляма юратаççĕ, çитĕннисем пек пулма ăнтăлаççĕ. Пархатарлă тĕслĕх çукки вара тепĕр чухне тĕрĕс мар утăмсем тума хистет. Шел те, пурнăçăн хăш-пĕр урокĕсене тӳрлетейми йăнăш тусан тин ăша хываççĕ шăпăрлансем...
Чĕр чунсемпе вĕçен кайăксен тĕнчине автор ăшă кăмăлпа сăнлать. Вĕсен йăли-йĕркипе паллашма питех те интереслĕ, хуйхи-суйхи вара чуна пырса тивет.

Ч-48017

УДК 821.512.111-93
ББК 84 (2Рос=Чув) 6-4

...ная библиотека
... Республики

ISBN 978-5-7670-2418-6

© Ларионов-Йĕлмел Н.Н., 2016
© Васильева Н.А., ӳкерчĕксем, 2016
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2016

Проверено ... 2017



# Мулкач çури

Микулайпа Ванюк кӳршĕллĕ пурăнаççĕ. Утăçи вăхăтĕнче Ванюк тетĕшĕ хиртен мулкач çури тытса килнĕ. Каçалăкне çулса пĕтернĕ чух çӳллĕ курăк хушшинчен çура сиксе тухнă та унталла-курталла чупкалама тытăннă. Ванюк тетĕшĕ комбайнĕ çинчен сиксе аннă та ăна пиншакĕпе хупласа тытнă. Каç енне ĕç пĕтсен вара килне илсе килнĕ.

Тепĕр ир Ванюк кас ачисене çĕнĕ хыпарпа тĕлĕнтерчĕ: вĕсен мулкач çури пур. Лешсем ăна: «Илсе тухса кăтартха, кăтарт ĕнтĕ», — тесе йăлăнчĕç. Темиçе минутран арçын ача мулкач çурине кăкăрĕ çумне пăчăртаса урама йатса тухрĕ. Ачасем мулкача çывăхран пĕрремĕш хут кураççĕ, çавăнпа вĕсен куç-пуçĕ чарăлсах кайрĕ.

Çура пĕчĕк-ха, чăмăр пысăкăш кăна. Вăл питĕ хăрать

ахăртнех: хăлхине çурăмĕ çине лапчăтса хунă. Куçĕ пысăк — тухса ӳкес пекех. Шăпăрлансем çурана аллисемпе çурăмĕнчен сĕртĕнсе ачашларĕç. Хăмăр-чăпар тĕслĕ çăмĕ кĕске, пурçăн евĕр çемçе. Чĕри мĕнле хыттăн тапать хăйĕн: кăрт-кăрт-кăрт, кăрт-кăрт!

Алăпа тытса пăхрĕç ĕнтĕ, халĕ мулкач çури чупнине курас килет ачасен. «Хытă чупать-ши? Çĕре ярар-ха, кăштах чуптăр-ха», — терĕ Микулай. Ванюк пĕшкĕнсе çурана ирĕке ячĕ. Кĕске хӳре малтан ниçта кая пĕлмесĕр пĕр вырăнта тăп ларчĕ, унтан тăрук тапса сикрĕ те купаланă каштасем айне кĕрсе кайрĕ. Ачасем унта чупса çитрĕç.

Çура тухмасть те тухмасть. Микулай купа тăррине хăпарса кайрĕ те сиккелеме пуçларĕ. Тантăшĕ хушăкран патакпа тĕккелесе çурана хăваласа кăларчĕ. Вăл кӳршĕсем енне тапса сикрĕ, кирпĕч купи хушшине кĕрсе çухалчĕ. Унтан та ăна хăратса, патакпа чышса кăларчĕç. Çура ним тума пĕлмерĕ, аптранипе урам урлă вирхĕнчĕ, вутă шаршанĕ айне кĕрсе кайрĕ. Ачасем кăшкăрашса ун хыççăнах чупрĕç, шаршан çине сике-сике хăпарчĕç.

Тантăшĕсем хытă шавланине, таçта васканине курсан касри ытти ачасем те пухăнчĕç. Вуннăн та пур-тăр халĕ. Патакпа хăмсарса мулкач çурине каллех вăшт хӳтерсе кăларчĕç. Хăраса ӳкнĕскерĕн ăçта каймалла? Вăл хӳтлĕх шыраса каллех урам урлă чупса каçрĕ те кашта купи айне кĕрсе çухалчĕ. Ачасен ушкăнĕ мулкач хыççăн тапăнса килекен çар пекех хыттăн кăшкăрашса чупать. Çитрĕç те каллех купа çине хăпарса сиккелеме пуçларĕç, каштасене патакпа çапса сасă кăлараççĕ, хыт янрашаççĕ. Анчах мулкач çури ним тусан та тухмасть! Пĕри ăна паçăрхи пек хушăкран патакпа та тĕкет, çурăмĕнчен те чышать. Çук, лешĕ хускалмасть, вырăнтан та куçмасть.

Ачасем вăл хĕсĕнсе ларнă пуль тесе кашта купине тустарма пуçларĕç. Пĕр айккине илсен аялта çура курăнчĕ.

Вăл темшĕн пуçне уснă. Ванюк пĕчĕкскерне аллине илчĕ. Мулкач çури çемçелсех кайнă-мĕн. Куçне те хупнă. Ак хайхи — çура вилнĕ иккен! Мĕн пулчĕ-ши ăна?! Ачасем кулянса ӳкрĕç.

Шăпăрлансем айкашнине урампа иртсе пыракан Михаля пичче курчĕ.

— Мĕн шавлатăр, мĕн пулнă кунта? — ыйтрĕ вăл.

— Мулкач çури вилсе кайнă! Тем пулчĕ... Халь кăна урам урлă чупса каçрĕ. Пит хытă чупатчĕ хăй... — терĕ Микулай.

— Мулкач çури çапларах çуйхашăва ăçтан тӳссе иртертĕр-ха? Пурăнма та хирте пурăнать вăл, ялта мар. Сирĕнтен хăранипе вилсе кайнă ĕнтĕ çура, шăв-шава чăтайман. Чĕри çурăлнă пуль ун. Мулкачсен хăрасан ун пекки час-часах пулкалать. Ку тата çура кăна вĕт...

Унтан Михаля пичче васкамасăр хăй çулĕпе уттарчĕ...



# Хуралҫă кушак

Чăрсăр — Акҫине кинемипе Аванир мучин хура кушакĕ. Вăл — тĕлĕнмелле чĕр чун, килти чăн-чăн хуҫа. Ытти кушаксенчен чылай пысăкрах, самăртарах. Пĕчĕк пума пекех курăнать.

Ҫура чухнех вăл ытти ҫынсен кушакĕсенчен урăхларахчĕ, хăйне евĕрлĕччĕ. Кил хуҫисем утса пынă чух ура ҫине вăрттăн сиксе ларатчĕ, чĕрнисемпе ярса илетчĕ те йĕп пек ҫивĕч шăлĕсемпе ҫыртатчĕ. Е чупса пырса ура кĕлинчен систермесĕр ҫыртса илетчĕ. Ҫавăнпа ятне те кушакĕн кăмăлне кура суйланă — Чăрсăр тесе чĕннĕ.

Ӳссе ҫитсен те пурпĕр пăрахмарĕ мăрмăр хăй йăлине. Хуҫисене хăнăхрĕ ĕнтĕ вăл, унчченхи пек хăратмарĕ. Анчах килен-каяна килĕштермерĕ: кравать айне кĕрсе ҫухалать те кĕтсе ларать. Меллĕ самант тупăнсанах хăна урине хыҫалтан вăрттăн пырса ҫыртатех — унсăрăн пӳртрен кăлармасть. Ҫапла, чĕрмест вăл — ҫыртать! Йытă та кирлĕ мар килте. Час-час килекенсене тивмест, палламаннисене пит юратмасть. Ҫиҫĕмле хăвăртлăхпа кравать айĕнчен сиксе тухса миҫе ҫынна хăратман-ши, ҫари! ҫухăрттарман-ши Чăрсăр?!

Харсăр кушак кăнтăрла пӳрте ют ҫынсенчен сыхлать, каҫпа вара ҫенĕке сунара тухать, шăши тытать. Унăн килĕштернĕ вырăнĕ пур. Картиш шăпăрĕ хумалли ҫӳлĕк ҫине хăпарса ларать те йăлтах сăнать. Шăши курăнсан ăна ҫаклататех. Самантрах ялт сикет, чĕрнисемпе кап! ярса илет те ĕнсинчен ҫатăрт ҫыртать.

Каҫ пулсан Чăрсăр яланхи пек хăй вырăнне йышăнчĕ, хăлхине чанк тăратсах итлеме пуҫларĕ. Шăши таврашĕ курăнмасть-ха. Кăштахран хыҫалти алăк патĕнче темскер чăштăртатни илтĕнчĕ. Кушак чалт сиксе илчĕ те ҫав тĕлелле пăхрĕ, хăлхине чанк тăратса тимлерĕ.



Акӑ алӑкри чӑхсем тухса ҫӳремелли шӑтӑкран тилӗ йӑпшӑнса кӗрет! Мӗн-мӗн те — кун пек хӑнана кӗтменччӗ кушак. Вӑл сунара тухнӑччӗ, кунта вара хуралҫӑ пулма тӳр килет. Кушак шӑртне тӑратрӗ, шӑлӗсене кӑтартрӗ, чӗрнисене кӑларчӗ те — малалла мӗн пуласса кӗтет. Тилӗ тӗттӗмре ун-кун пӑхкаларӗ, шӑршлакаларӗ, анчах нимех те асӑрхамарӗ. Чӑх карти еннелле йӑпшӑнчӗ хуллен.

Унччен те пулмарӗ — Чӑрсӑр мяу! тесе хытӑ кӑшкӑрса ячӗ те тилӗ ёнси ҫине ҫӳлтенех лаплатрӗ! Акӑ вӑл вӑрӑм хӳреллӗ чӗр чун питне-сӑмсине мяу-мяу! тесе ҫухӑрса пӗр шелсӗр чӑрмалать, ҫыртать. Лешӗ пӗчӗк ача сассипе хыттӑн ӳлесе ячӗ, ҫӗр ҫинче йӑваланма-ҫаврӑнма тытӑнчӗ, малти урипе кушака ҫапса антарма хӑтланчӗ. Чӑрсӑр ӑна пурпӗр вӗҫертмерӗ — питӗ вирлӗ ярса илнӗ. Каҫхи хӑрушӑ сасӑпа автан та, чӑхсем те вӑранчӗҫ, хытӑ кӑтиклетме тытӑнчӗҫ.

Ҫапла пӗр вӑхӑт ҫуйхашса тапаҫланнӑ хыҫҫӑн тилӗ темле майпа вӗҫерӗнчӗ те алӑк патнелле ҫил пек ыткӑнчӗ. Шӑтӑка тӳрех тӗл лекеймерӗ-ха вӑл, алӑк ҫине шаплатса ҫапӑнчӗ. Унтан тепӗр хут пуҫне шӑтӑка чиксе аран тухса тарчӗ, сиккипе ҫырманалла вӗҫтерчӗ.

Тилӗ кунта тепре килӗ-ши?



# Аманнӑ кайӑк кӑвакал

Ҫӗртме уйӑхӗн варринче вун икӗ ҫулти Сашук Пчӗлка ятлӑ йыттипе ялтан икӗ ҫухрӑмра вырнаҫнӑ пысӑк пӗве патне кайрӗ.

Пчӗлка — ҫӑмламас ягдтерьер*, пӗвӗпе лутра, ҫӑмӗ хура та шӑрт пек хытӑ. Куҫӗ те кӑмрӑк евӗр йӑм хура. Питӗ йӑрӑ йытӑ, пӗр вырӑнта лара-тӑра пӗлмест. Шав унталла-кунталла чупкалать, тем шӑршлать, шырать. Тата шыва кӗме юрататать. Ҫулла Сашукпа пӗрле пӗвере те шав чӑмпӑлтататать, пулӑ йӑмнине е шапа шӑмпӑлтатнине курсан никам хушмасӑрах шыва сикет.

Акӑ Сашукпа Пчӗлка пысӑк пӗве патне ҫывхарчӗҫ. Мӗн курчӗҫ-ха вӗсем? Шыв тӗкӗрӗ ҫийӗн ҫутӑ хӑмӑр тӗслӗ кайӑк кӑвакал хӑй хыҫӗнчен виҫ кӗтеслӗ хумсем хӑварса ишсе пырать. Ун хыҫҫӑн вара пӗчӗк виҫ кӗтессем туса ҫичӗ-сакӑр сарӑ хӑмӑр чӗпӗ хуллен куҫать. Кӑвакал ами ачапа йытта тӳрех асӑрхарӗ, икӗ хутчен хыттӑн: «Нарт-нарт!» — терӗ. Чӑмӑр пысӑкӑш ула-чӑпар чӗпсем каялла вӗлт ҫаврӑнчӗҫ те урисемпе шепӗлтеттерсе, тӗкленеймен ҫунаттисемпе хӑйсем хыҫҫӑн шыв сирпӗтсе сарлака йывӑҫ тӗмӗ айне кӗрсе ҫухалчӗҫ. Ку тӗм шывра ларать, апла кунта кӑвакал йӑва ҫаврӑнӑ. Чӗпсем килне тарса ӳкрӗҫ...

Акӑ йытӑ шыва шӑмпӑлт! сикрӗ те кӑвакал еннелле вӗре-вӗре ишсе кайрӗ. Лешӗ ҫунаттисемпе шыва хыттӑн ҫапа-ҫапа пӗве варринелле пилӗк-ултӑ хӑлаҫ куҫса ларчӗ. Пчӗлка хавхаланса кайрӗ — аманнӑ кӑвакала часрах ярса илесшӗн шав тапаҫланать. Малалла тата хытӑрах вӗрсе-нӑйкӑшса ишет. Кайӑк кӑвакал вӑл ҫывхарсан шыва ҫунаттисемпе ҫат-ҫат! ҫатлаттарса, нартлата-нартлата тата шаларах вӗҫсе ӳкрӗ. Йытӑ хӑй тӗллевӗнчен пӑрӑнма пач

---

* Ягдтерьер — сунар йытти.

шутламасть — икĕ еннелле хумсем сарса кăвакал патневаскать. Лешĕ йытта чăтăмлăн кĕтсе илчĕ те вăл çывхара пуçласан пĕве варринех куçса ларчĕ. Акă йытă ун патне ишсе çитет...

Унччен те пулмарĕ — кăвакал вă-ă-р-р! турĕ те çунаттисемпе хăвăрт-хăвăрт çапса сывлăша вĕçсе хăпарчĕ, унтан пĕвен тепĕр енчи курăк хушшине ларчĕ. Ак сана «аманнă» кăвакал! Халĕ инçетрен сăнать авă. Вăл ирĕклĕ кайăк çав, хăй тĕллĕн чĕпĕ пусса кăларса, хăй тĕллĕн тăранса, тăшмансенчен сыхланса пурăнать!

Йытă ним тума пĕлменнипе урса кайрĕ: нăйкăшать, вĕрет, малти урисемпе шыва çапать! Темиçе хутчен хăй йĕри-тавра ишсе çаврăнчĕ. Кăвакал вĕçсе кайнă еннелле ишет те Сашук патнелле килет. Пĕрре каялла çаврăнать, тепре таврăнать, вĕçĕмсĕр вĕрет. Юлашкинчен чарăнса енчен енне çаврăнкаларĕ те тинех ăнланчĕ пулас: эх, ку кăвакал улталарĕ! Унтан нăйкăша-нăйкăша хуçи патне çул тытрĕ. Çыран хĕррине тухсан шыв сирпĕте-сирпĕте силленчĕ те Сашук çумне килсе тĕршĕнчĕ. Хăй лăпланаймасть, чĕтрет, пашкать. Арçын ача куçĕнчен айăплăн пăхса хуллен йынăшать, ури çумне нӳрлĕ çăмĕпе сĕртĕнет. «Каçар ĕнтĕ, сана кăвакал тытса параймарăм вĕт, улталантăм...» — тет, ахăртнех, хăй чĕлхипе.

Сашук Пчĕлкăн йĕпе çурăмне аллипеле шăлчĕ. Тусне ачашларĕ, шеллерĕ, ун «хуйхине» сирме тăрăшрĕ вăл.





# Саркка

Пĕччен пурăнакан Хветуç кинемин пĕр харăсах кушакĕ те, йытти те çăвăрларĕç. Кашнин пĕрер çура. Килте урăх чĕр чун та çук.

Сарă тĕслĕ çамрăк кушак — Саркка — пăлтăрти арча хыçĕнче кивĕ пиншак çинче выртать, çурине ĕмĕртет. Кушакран нумай та мар пысăкрах, кĕске сăмсаллă хура йытти вара — Кнопка — аслăк айĕнчи кĕтесре кивĕ улăм çинче вырнаçнă. Вăл та хăйĕн çурипе киленет.

Кинеми те питĕ савăннă, кунĕпе тенĕ пекех вĕсемпе вăхăтне irttерет. Пĕрре пăлтăрта арча çине ларса кушак çемйипе калаçать, тепре аслăк айне тĕмсĕлет, кивĕ каска çине меллĕн вырнаçса йытăпа çурине сăнать, вĕсемпе мăкăртататать. Унтан урама тухса ларать те чĕр чунĕсем çинчен кӳршисене хавхаланса каласа парать. Çак

самантра хăйне йышлă çемьере пурăннă пекех туять, вăхăтлăха çан-çурăмĕ ыратнине те манать, кичемлĕхе те сирет.

Темиçе кунтан тем амакĕ пулчĕ-çке — кушак çури вилсе кайрĕ! Куçĕ те уçăлманччĕ-ха. (Кушак çурин вăл вун икĕ кунран кăна уçăлать-çке.) Хветуç кинемин те, кушакăн та — хуйхă. Саркка ниçта кайса кĕреймест, кунĕпе унталла-кунталла уткалать. Чĕччисем карăннă, унта сĕт пухăннă, кансĕр ĕнтĕ кушака.

Кинеми йыттине картишĕнче апат пачĕ те хуйхине кӳршисемпе пайлама урама тухса ларчĕ. Апатне çисе ярсан Кнопка çынсем патне пычĕ, курăк çине килсе выртрĕ. Кунта та кинеми йыттипе калаçмасăр чăтаймарĕ, çуруна пĕчченех хăвартăн-и тесе унпа ăшшăн пуплерĕ. Пĕр авăк калаçса ларнă хыççăн Хветуç кинеми йыттине йыхăрса картиш алăкне уçрĕ, туйи çине тĕревленсе пусма тăрăх ерипен хăпарчĕ те пăлтăра кĕчĕ.

Хайхискер хăнăхнă йăлапа арча хыçне пăхрĕ те — тĕлĕнсех кайрĕ. Сарă кушак хура йытă çурине ĕмĕртсе выртать! Вăт тамаша! «Кушак аслăк айне тухса йытă çурине вăрласа кĕнĕ-и ĕнтĕ?» — пĕччнех калаçрĕ кинеми. Унтан аслăк айне кăштăртатса тухрĕ. Кунта йытă ниçта кайса кĕреймесĕр çурине шырать, нăйкăшать. Мĕн тумалла Хветусăн? Çурана халех илсе тухса вырăнне хурас — кушака та шел. Вăл та тин çеç çăвăрланă амăшĕ-çке... Унăн та ĕмĕртесси килет. Пĕр çурана — икĕ амăшĕ.

Каç енне сулăнсан кушак пӳрте кĕчĕ, канма выртнă Хветуç кинеми ури çумне пырса тĕршĕнчĕ. Çиесси килнĕ ĕнтĕ унăн, хуçине тăрататсшăн. Ăна апатлантарнă хыççăн ватă çын каллех пăлтăра тухрĕ. Арча хыçне пăхрĕ — нимĕн те курăнмасть!.. Çура ăçта çĕтнĕ вара? Хветуç кинеми аслăк айне тĕрĕслерĕ. Хура йытă хăйĕн çурине чиперех ĕмĕртсе выртать! Тĕлĕнтермĕш тĕк тĕлĕнтермĕш!

Йытă та парăмра юлман иккен, пăлтăр алăкĕнчи кушак çӳремелли шăтăкран кĕрсе хăйĕн çурине илсе тухнă, тĕпренчĕкне «тыткăнран» хăтарнă.

Тепĕр ир кинеми пăлтăра тухрĕ те — ак тамаша! Кушак каллех йытă çурипе юнашар выртать. Кăштахран ун хыççăн пăлтăра йытă та йăпăртатса кĕчĕ.

«Эй-эй-эй, апла мар, Саркка! — терĕ Хветуç кинеми мĕн пулса иртнине курсан. — Сирĕн кунта вĕçĕ-хĕрри çук. Çурана унталла-кунталла йăтатăр та йăтатăр! Унăн чăн-чăн амăшĕ пур. Вăл çурине илме килнĕ. Ăна хăех пăхса ӳстертĕр. Вĕсем йытă ăратĕнчен вĕт, эсĕ вара — кушак. Атя Кнопкăна хăйĕн ачине тавăрса паратпăр, маттурскерĕм?»

Хветуç кинеми кушак çумĕнче выртакан йытă çурине пĕшкĕнсе аллине илчĕ те пăлтăртан ерипен тухрĕ, аслăк айне кĕрсе кайрĕ. Кнопка ун хыççăн сиккелесе, хӳрине савăнăçлăн палтăртаттарса пычĕ.

Каç енне Хветуç кинеми каллех йытă çемйине курма тухрĕ. Кнопка киленсе çурине ĕмĕртет. Пуçхĕрлĕ çавăрса хунă, шултăрканă йывăç пичке çинче вырнаçнă Саркка вара çакна тимлĕн сăнаса ларать...





# Тимлĕ Тимук

Пĕчĕк Тимук урамра выляса çӳрет. «Тук-тук-тук! Тук-тук-тук!» — сасă илтрĕ вăл. Мĕн япали ку? Сасă ăçтан тухать? Арçын ача пĕр вырăнта шăпăрт тăрса итлеме тытăнчĕ. Каллех: «Тук-тук-тук!» Тимук йĕри-тавра çаврăнса пăхкалать — нимĕн те курмасть. Сасă тепĕр хут илтĕнсен вара вăл çӳлелле пăхрĕ те шăнкăрчран кăшт пысăкрах ула вĕçен кайăка курах кайрĕ: «Акă иккен вăл, таклаттарса лараканни!» Темле вĕçен кайăк телевизор антеннине тытса тăракан вăрăм каштана варри тĕлĕнчен таккать. Арçын ача халиччен кун пеккине курман.

«Мĕнле кайăк ку тата? Ула такка мар пулĕ ĕнтĕ, вăл вăрманта пурăнать тесе вуланăччĕ-иç эпĕ кĕнекере», — шухăшларĕ Тимук. Унтан пӳрте чупса кĕчĕ.

— Атте, атте! Пирĕн антеннăна темле кайăк таккать! — терĕ вăл.

Иккĕшĕ те урама тухрĕç. Ашшĕ çӳлелле пăхрĕ.

— Ула такка ку. Урăх нимĕнле вĕçен кайăк та йывăça çакăн пек таккамасть. Пăх-ха эсĕ ăна, чăх сăхса ĕлкĕреймест — таклаттарать кăна вĕт! Апла тăк ку кашта çĕрме пуçланă, ăна шĕкĕ ернĕ. Ула такка сывă йывăça ахаль таккамасть, — терĕ вăл.

— Ула таккасем яла килеççĕ-и вара? Вĕсем вăрманта пурăнаççĕ вĕт. Унта йывăç сахал-им вĕсем валли? — ыйтрĕ Тимук.

— Час-часах килеççĕ çав. Вĕсем ялти йывăçсене те, çывăхрисене те тĕрĕслесех тăраççĕ, хурт-кăпшанкăран тасатаççĕ, сиплеççĕ. Анчах пирĕн каштана сыватма çук ĕнтĕ, ăна паянах урăххипе ылмаштармалла пулать. Унсăрăн вăл ӳксе кама-тăр амантма е пӳрт тăррине сиенлетме пултарать. Маттур-çке эсĕ, Тимук! Санăн тимлĕхӳ пире инкекрен хăтарчĕ! — терĕ ашшĕ ывăлне мухтаса.



# Вут хӳре

Ҫӗртме уйӑхӗн варри ҫитсе пырать. Ҫанталӑк самаях ӑшӑтнӑ. Вӗршӗнсем те, чӗкеҫсем те вӗҫсе килнӗ. Таврара тӗрлӗ чечек-курӑк ешерет. Вӑрӑм тунасем те тухнӑ ӗнтӗ, нӑйлатса йӑлӑхтараҫҫӗ. Ыраш ҫилпеле тинӗс евӗр хумханать, пучаха ларать.

Тилӗсен вара шӑпах йӑптӑх* тӑкмалли вӑхӑт халӗ. Акӑ пӗр хӗрлемесӗ хӗвел питтинчи ҫыранра вырнаҫнӑ шӑтӑкӗ патне лӗпӗстетсе ҫитрӗ. Хӗллехи хулӑн ҫӑмӗ тӗл-тӗл ҫакӑнса тӑрать хӑйӗн. Кӗске ҫӑмӗ айӗнче аяк пӗрчи шӑммисем кӑштах палӑраҫҫӗ — хӗллехинчен самай начарланнӑ тилӗ. Тупӑшне ҫӗре пӑрахрӗ те нӑйкӑшса сасӑ пачӗ вӑл. Шӑтӑкран виҫӗ ҫура йӑпӑртатса тухрӗ. Ултӑ-ҫичӗ эрнере кӑна-ха вӗсем. Пӑхсан кашкӑр ҫурисене аса илтереҫҫӗ: сӑмсисем шӗвӗр, виҫ кӗтеслӗ хӑлхисем чанк тӑраҫҫӗ. Ан-

---
* Йӑптӑх — тӑкӑнакан ҫӑм.

чах тĕсĕпе сарăрах тилĕ çурисем, хÿри вĕçĕнче вара шурă пăнчă пур. Çурасене амăшĕ ĕмĕртет-ха, çапах та вĕсене ытти çимĕçе те хăнăхтарасшăн. Пĕчĕкскерсем шăтăкран тухсан йĕри-тавра чупкаласа хурт-кăпшанкă çиеççĕ, шăши тытма та пикенесшĕн.

Хальхинче те çурасем шăтăкран тухнă-тухман амăшĕ патне вĕтĕртетсе пычĕç. Иккĕшĕ хыçалти урисем çине тăрса амăшĕн çăварне çулама пуçларĕç. Тепри сăмсипе чĕччи патне чышăнать. Кăштах çапла айкашнă хыççăн çурасем амăшĕ йăтса килнĕ мулкача йĕп пек çивĕч шăлĕсемпе çыртса турткалама тытăнчĕç.

Çурисемпе аппаланса тилĕ самантлăха тимлĕхне çухатрĕ: çырма хĕррипе утса килекен виçĕ арçын ачана лешсем çывхарсан çеç асăрхарĕ. Тилĕ икĕ-виçĕ хутчен çинçе сасăпа чяв-чяв! вĕрсе илчĕ те — çурасем туххăмрах шалалла кĕрсе çухалчĕç. Хăй вара çырмана анса кайрĕ, тепĕр енне васкамасăр, çаврăнса пăха-пăха каçрĕ.

Ку тилле ачасем палласçĕ. Вăл икĕ çул ял хĕрринче пурăнать ĕнтĕ. Ăна кам кăна курман-ши, миçе йытăпа хăвалаттарман-ши, анчах никам та тытаймасть. Яланах çырманалла анса тарать те вут тĕслĕ вăрăм хÿрине çеç кăтартса хăварать. Ял хĕрринчи урамра пурăнакансем ăна çавăнпа Вут хÿре тесе ят панă.

Ачасем шăтăк патне çитрĕç. Ун йĕри-тавра мĕн кăна йăваланса выртмасть: мулкач ури, кăвакарчăн тата курак çунаттисем, чĕрĕп тирĕ... Анчах шăпăрлансене пачах интереслентермерĕç кусем. Вĕсем мулкача çавăркаласа пăхрĕç. Çав вăхăтра аслăрах ачи: «Атя тилĕ çурисене чавса кăларатпăр, киле илсе каятпăр. Мулкач пур ĕнтĕ пирĕн!» — терĕ. Çавăнтах тепĕр тантăшне килтен кĕреçе тата михĕ илсе килме хушрĕ. Иккĕн шăтăк патĕнче юлчĕç.

И-48017

Тепĕр сехетренех виççĕмĕшĕ кирлĕ япаласене йăтса



Национальная библиотека
Чувашской Республики



таврăнчĕ. Асли унран кĕреçине илсе тӳрех чавма тытăнчĕ. Каярахпа ылмашăна-ылмашăна ĕçлерĕç. Хĕвел çинче тапаланса самаях тарларĕç. Чылай хушă тăрăшрĕç, самай тарăн шăтăк турĕç. Ун тĕпĕнче пĕр-пĕрин çумне тĕршĕнсе, чĕтресе ларакан çурасене тупрĕç, пĕрерĕн-пĕрерĕн тытса миххе ячĕç те ялалла васкарĕç.

«Мухтанатпăр ĕнтĕ хамăр кас ачисем умĕнче! Вĕсенчен хăшĕ тилĕ тата мулкач тытса курнă-ха?» — терĕ асли сăмсине каçăртса.

Мĕн пулса иртнине тĕмеске хыçĕнчен веçех курса выртрĕ тилĕ. Михĕ йăтнă ачасене куç илми сăнарĕ, çапла пăхсах ăсатрĕ те вĕсене ялалла.

Ирпе çанталăк уярччĕ, çил те çукчĕ. Халĕ акă хĕвел анăçĕнчен тăхлан пĕлĕтсем шуса тухрĕç. Кăштахран инçетре çиçĕм çиçрĕ, аслати кĕмсĕртетрĕ — кĕç-вĕç çумăр çуса ярас пекех. Çил тĕрлĕ енчен вĕрет, тиллĕн кивĕ çăмĕн пайăркисене выляткаласа хускатать. Лешĕ ăна сисмест те тейĕн: мĕнпур шухăшĕ çухалнă çурисем тавра явăнать. Куçĕ те шывланнă пек, ял еннелле салхуллă пăхать: ачисене мĕнле хăтармалла?

Çуллахи кун вăрăм, çавăнпа тилĕ каç пуласса аран кĕтсе илчĕ. Тĕттĕмленсен вара çырма урлă вăшт каçрĕ те шăппăн-шăппăн ял патне çывхарчĕ. Пĕччен уйăх кăшт çеç палăрать, çăлтăрсем çук. Вут хӳре асăрханса утать-утать те чарăнса тăрать — таврари сасăсене итлет. Унтан куршанкă-вĕлтĕрен хушшипе пыракан ансăр сукмака шăршласа малалла каять — çурисене тупасшăн.

Çул икĕ анкарти хушшипе тăсăлать. Йăпшăнса çурт патне çитрĕ тилĕ. Пысăках мар кивĕ улăм капанĕ хыçне çитсен урамра пĕр çинçе сасăллă йытă вĕрсе ячĕ. Ун хыççăн тĕрлĕ сасăпа — тата темиçен. Тилĕ тăр-тăр чĕтрет. Вăл капан çумне тĕршĕнчĕ. Пĕр вăхăт хамлатнă хыççăн йытăсем шăпланчĕç. Капан ăшĕнче шăшисем чĕриклет-

ни илтӗнет, анчах халӗ вӗсем Вут хӳрене нимӗн чухлӗ те кăсăклантармаççӗ. Ун çурисене тупмалла!

Тилӗ ăçталла утнине хăй кăна пӗлет. Акă вăл анкарти пралукӗпе пырса хӳме хушăкӗнчен тухрӗ, чӳречисенчен çутă курăнман пӳрт умӗпе иртрӗ. Урама тухас умӗн те чылай вăхăт таврана сăнарӗ. Таçта хăнтăр-хантăр сасă илтӗнет: ахăртнех, машина çинчен темӗн пушатаççӗ.

Икӗ çын шавлăн калаçса иртрӗ. Инçех мар кушаксем çухăрса ячӗç, анчах вӗсен сасси тиллӗн хăлхине пачах кӗмерӗ. Вут хӳре йăпăр-йăпăр чупса урам урлă каçрӗ те тӗкме хушăкӗнчен кӗрсе çухалчӗ. Халӗ вăл ялта ӗнтӗ, кунта вара йытă нумай. Вӗсене те систермелле мар, çурисем ăçтине те пӗлмелле...

Умра — выльăх-чӗрлӗх тăракан карта, ун çумӗнче — вите. Кунта ула ӗне кавлесе выртать, вăхăтăн-вăхăтăн тарăннăн хаш! сывлать. Тилӗ кунтан пит шăппăн иртрӗ, мунча патне çитрӗ. Шав чарăна-чарăна сасăсене тăнлать. Çурисем нăйкăшни ниçта та илтӗнмест.

Вут хӳре хырăмне перӗнекен çӗр улми аврисем çийӗн асăрханса утрӗ, анкарти урлă каçрӗ, тепӗр çурт патне ăнтăлчӗ. Шав сывлăша шăршлать хăй, пырсан-пырсан пӗр вырăнта тăп тăрса таврана итлет. Çапла темиçе çурт патӗнчен те иртрӗ тилӗ. Анчах те аяккалла пăрăнмарӗ, çавăнтах явăнчӗ.

Юлашкинчен Вут хӳре пралук çумӗнчи çуртран инçех мар ларакан мунча патне пырса тăчӗ, итлерӗ. Ак хайхи: тем йăшăлтатнă, нăйкăшнă сасă! Вут хӳре те нăйкăшса сасă пачӗ. Вăл сасартăк карт сиксе илчӗ. Ун çурисем! Йăнăшма пултараймасть вăл: тăван сасăсем чӗрене пырса тивеççӗ. Шалти йыхрав кунталла тӗрӗс илсе килчӗ иккен тилле. Мунча пăлтăрӗнче çурасем хытах йынăшма пуçларӗç. Тилӗ тепӗр хутчен сасă пачӗ те, лешсем шăпланчӗç. Амăшӗ ӗçе пикенчӗ: çӗре чавма пуçларӗ.



Вăхăчĕ хĕсĕк. Пĕр йăнăш хусканупа шăв-шав кăларсан — йăлтах пĕтрĕ! Таврари йытăсем чупса килсен тирне сĕвеççех. Çурасен амăшĕ чават-чават те енчен енне куç ывăтса илет, никам та килмест-и тесе тăнлать. Леш касри йытăсем вĕрме пуçларĕç. Кунтисем çеç ан сисчĕр тилĕ яла килнине!

Вут хӳре хашка-хашка ĕçлет, хура тăпрана хыçалалла сирпĕтет. Малтан аялалла чавса анчĕ. Каярах çӳлелле тухмалла-çке! Ку ĕç чылай йывăртарах: типĕ тăпра аялалла ӳкет, тусан куçа кĕрет, сăмсана хуплать. Тилĕ пăчăх-пăчăх тăва-тăва сăмси шăтăкĕсенчен тăпра сирпĕтет. Сывлăш çитмест! Чăтайманнипе вăл каялла чакса тухрĕ, таврана тепĕр хут итлерĕ. Чĕри кăкăрĕнчен сиксе тухасла тапать. Васкамалла...

Тепĕр авăкран Вут хӳре каллех шăтăка кĕрсе кайрĕ. Ун тăватă ури те пĕтĕм вăйпа ĕçлет: малти урисемпе

тăпрана туртса хыçалалла куçарать, кайри урисемпе ăна тулалла тапса кăларать. Шăтăкран тиллĕн вут тĕслĕ хĕри кăна курăнать. Чылай тапаланчĕ харсăрскер, çапах та çурисем патне çитрĕ, мунча пăлтăрĕнчи сак айне чавса тухрĕ! Лешсем амăшĕн çăварне çулама, хăй тăрăх сикме пикенчĕç. Çемье пĕрлешрĕ, анчах ялтан çак эртелпе пĕр сасă-чĕвĕсĕр мĕнле тухса каймалла? Нумай шутласа тăма та вăхăт çук — тармалла кунтан часрах! Тилĕпе çурисем умлăн-хыçлăн шăтăкран урамалла тухрĕç.

Уйăх самаях çуталнă, тӳпере çăлтăрсем те пур. Паçăр çакна асăрхаманччĕ Вут хӳре.

Акă çемье урам варрине çитрĕ. Çак вăхăтра пĕр çури пысăках мар шăвăç татăкĕ çине кĕрсе кайрĕ те шăнкăр-шанкăр сасă кăларчĕ. Çакна илтсе паçăрхи çинçе сасăллă йытă каллех хыттăн вĕрсе ячĕ. Ун хыççăнах — хулăн саслисем. Унччен те пулмарĕ — пысăк ула йытă хапха айĕнчи шăтăкран вăшт тухрĕ те тилĕсене курчĕ, вĕсене хăвалама пикенчĕ.

Ун сассине илтсе тата икĕ йытă вĕре-вĕре чупса çитрĕ.

Ял — тискер кайăк çӳремелли вырăн мар çав, кунта йытăсем хуçа. Вĕсем анкарти хушшинчи сукмакпа таракан тилĕсене хăваласа кайрĕç. Малта амăшĕ вирхĕнсе пырать, ун хыçĕнче — çурисем. Часах чи хыçалта пыраканни хытă çухăрса яни таврана янратрĕ: ăна малта пыракан йытă ярса тытрĕ те тулама пуçларĕ. Самантран тепĕр çури çухăрса яни амăшĕн чĕрине çĕçĕпе чикнĕ пекех ыраттарчĕ — ăна иккĕмĕш йытти тытса чарчĕ. Амăшĕ виççĕмĕш çурине икĕ хутчен чяв-чяв тесе сасă пачĕ те — леш çĕр улми ани енне вирхĕнчĕ. Çăмламас йытă Вут хӳрене сукмакпа хăваласа кайрĕ. Тилĕ хăй яла килнĕ çулпа çырма хĕррине çитрĕ, ун урлă каçрĕ. Йытă çырма умĕнче чарăнчĕ, каçмарĕ.

Вут хӳре хăтăлчĕ-ха, анчах ачисем епле-ши? Вĕсем чĕрĕ



юлайрӗҫ-ши? Йытӑсем хытӑ вӗрни, тулашни илтӗнет. Тилӗ чӗри карт-карт тапать. Чӗр чун ял енне пӑхать, анчах халь тин ачисене нимӗнпе те пулӑшаймасть.

Часах шӑв-шав тамалчӗ...

Кӑвак ҫутӑ киле пуҫласан сукмак тӑрӑх кайса пӑхма шутларӗ тилӗ. Унта хуллен йынӑша-йынӑша ҫурисене шырарӗ. Шел, сас паракан пулмарӗ. Кӑштах кайсан пӗр ҫурине асӑрхарӗ: ӑна туласа вӗлернӗ. Ҫурт ҫывӑхӗнче тепӗр ҫурин виллине тупрӗ амӑшӗ. Кусене каялла тавӑраймастӑн ӗнтӗ, виҫҫӗмӗшӗ ӑҫта-ши тата?

Вут хӳре каялла ҫаврӑнчӗ те мӑянсем патӗнче йынӑшса ҫӳресе виҫҫӗмӗш ачине шырарӗ. Унччен те пулмарӗ — лешӗ сас пачӗ. Ҫум курӑк хушшинче тупрӗ ӑна амӑшӗ. Пӗчӗкскер урине ыраттарнӑ иккен — йынӑшса выртать. Ҫапах та сывӑ! Ҫакӑнта ҫитме пултарнӑ. Чӗрӗ юлнӑ пӗртен-пӗр тӗпренчӗкӗн ҫӑварне, пит-куҫне ҫулама тытӑнчӗ Вут хӳре. Лешӗ хуллен тӑчӗ, амӑшӗн ҫӑварне ҫуласа илчӗ те ун ҫумне тӗршӗнчӗ.

Тилӗсем ерипен сукмакпа утрӗҫ: амӑшӗ — малта, ун хыҫҫӑн ҫури уксахласа пырать. Ҫапла вӗсем ҫырма урлӑ каҫрӗҫ те хире — хӑйсем пурӑнакан вырӑна — тухрӗҫ. Тискер кайӑка ирӗкрех пурӑнма аван ҫав!

Хӗвел тухӑҫӗнчен вара шурӑмпуҫ ҫуталса килетчӗ...



# Шăтăк

Пуш уйăхĕнче самаях ăшăтса ячĕ. Икĕ кун çумăр çурĕ, виççĕмĕшĕнче янкăр тӳпене çутă хĕвел хăпарчĕ. Пӳрт умĕнчи юр лаштăртатса путма пуçларĕ. Сукмаксем те пăсăлчĕç.

Пиллĕкмĕш класа каякан Кавĕрле шкултан таврăнсан апатланчĕ те урама тухрĕ, уткаласа çӳрерĕ. Ура айĕнчи юр путать, аялтан шыв тухать.

Кавĕрле икĕ çул каялла пулса иртнине аса илчĕ. Ун чухне ăна аслăраххисем юр çинче чавса хунă шăтăка чăмтарнăччĕ. Атă кунчинчен шыв кĕнĕччĕ, арçын ача йĕре-йĕре килне чупнăччĕ.

Шăтăкне чавса хуракансем унран ахăлтатса кулнăччĕ.

Кавĕрле пуçне кавар шухăш пырса кĕчĕ: «Халĕ хам та пысăк ĕнтĕ. Час эп те кама та пулин путаратăп!»

Каланă — тунă. Арçын ача кĕреçе илсе тухрĕ те хăйсен умĕпе иртекен сукмак çинче шăтăк чавса хучĕ. Ăна сĕлкĕшленнĕ юрпа тултарчĕ. Çиелтен тикĕслекелерĕ. Унтан çынсене кĕтме пуçларĕ.

«Халĕ хам та пысăк ĕнтĕ, эпĕ те ыттисенчен кулма пултаратăп», — шухăшларĕ вăл.

Кăштах тăхтасан икĕ кил урлă пурăнакан тăххăрти Тимĕр хапхаран тухрĕ. Кавĕрле ăна: «Кил кунта, пĕрле выльăпăр!» — тесе чĕнчĕ.

Лешĕ сукмакпа пĕр шухăшсăр чупса килет. Кавĕрле шăтăкĕ патне çитсен лаштăр! анчĕ кайрĕ. Чĕркуççи те курăнмасть. Аллипе тыткаласа шăтăкран аран тухрĕ те йĕрсе ячĕ: «Эсĕ юри мана путарас тесе чавса хунă ку шăтăка!» Тимĕрĕн икĕ атти кунчинчен те сивĕ шыв кĕнĕ-мĕн.

Ку вăхăтра Кавĕрле пĕр чарăнми ахăлтатса кулчĕ. «Çуркунне шыва путмасăр ăшă çуллана кĕтсе илейместĕн!» — тесе йĕкĕлтешрĕ-ха тата.



Тимӗр атти ăшӗнчи шыва шăмпăртаттарса килнелле чуптарчӗ.

Эх, савăнчӗ Кавӗрле хăйӗн пултарулăхӗпе тавçăрулăхӗшӗн! Кунпа кăна çырлахмарӗ-ха вăл. Шăтăка каллех шыв серепи туса вăр-вар майлаштаркаласа хучӗ. Хăй унталла-кунталла уткаларӗ, урампа кам-тăр иртмӗ-ши тесе пăхкаларӗ: «Пӗри лекрӗ-ха, халь тепӗрне сиктерӗпӗр!»

Темиçе минутран урама кӳршӗри Якур тухрӗ. Вăл çиччӗмӗш класра вӗренет. Ун аллинче — йывăçран ăсталанă вертолёт, пропеллерне çутă шăвăçран тунă. Çиле хирӗç тăрсан палтăртатса çаврăнать вăл, хӗвел çутипе йăлтăртататать.

Кавӗрле самолёт-вертолёта питӗ кăмăллать çав, вӗсем еплерех вӗçсе иртнине кашнинчех тимлӗ пăхса тăрать. Хальхинче те юлташӗн аллинче йывăç вертолёт курсан чăтса тăраймарӗ, пӗтӗм япала çинчен манса сукмакпа ун патне чупрӗ. Анчах хăй чавнă шăтăк тӗлне çитрӗ те лаштăр! анса кайрӗ. Халь ӗнтӗ хăйӗн атти туллиех — çурхи шыв! Ури шăнса кӳтрӗ. Çан-çурăмӗ тăрăх сивӗ хăпарать. Кавӗрле чӗркуçленсе, тăват уран упаленсе, тапаланса шăтăкран тухрӗ те килнелле вирхӗнчӗ...

«Çын валли шăтăк ан чав, унта хăвах кӗрсе ӳкӗн», — тесе ахальтен каламан çав ваттисем.





# Ҫăра тыткăнĕнче

Хĕллехи сивĕ кун Витя тумланчĕ те картишне тухрĕ. Пăхрĕ те — аслăк айне кĕрекен алăк ҫинче пысăк ҫăра ҫакăнса тăрать-мĕн. Тӳрех ун куҫĕ тĕлне пулчĕ вăл темшĕн. Ун патне ура айĕнчи юра кăчăртаттарса утса пычĕ, ҫăра — ҫăварĕ тĕлĕнчех. Арҫын ача ун ҫине ăшă сывлăш вĕрчĕ. Ҫăра пасарса, шуралса кайрĕ. Халь кăна хураччĕ-ҫке! Ача кăштах пăхса тăчĕ те ҫăра ҫинчи паса ирĕлтерем-ха тесе тата вĕрчĕ. Вăл тата шурăрах пулса тăчĕ.

«Мĕн пулчĕ-ха ăна, мĕншĕн вĕрсен шуралать?» — кăсăкланчĕ Витя. Паса ирĕлтерес шутпа чĕлхипе ҫăра ҫумне перĕнчĕ. Ай, мĕн ку?! Чĕлхене сивĕ ҫатăртаттарса, пĕҫертсе илчĕ! Туртса илесчĕ те — уйрăлмасть. Хайхискер тимĕр ҫăра ҫумне ҫыпăҫсах ларчĕ. Ăна туртма хăтланать арҫын ача — тата хытăрах ыраттарать!

Мĕн тумалла? Лекрĕ тĕк лекрĕ! Кăшкăрма та май çук хуть. Сивĕ пирки ним пĕлми пулчĕ ĕнтĕ чĕлхи... Витя çăрана икĕ алăпа ярса илчĕ те пĕр хускалмасăр тăрать. Ун çине сывлăшне темиçе хут хыттăн вĕрсе кăларчĕ — усси çук, ăшăтмасть, тимĕр пурпĕр хăй тыткăнĕнчен ямасть. Арçын ача хăраса ӳкрĕ.

«Хăçанччен тăмалла кун пек?! Чĕлхе çăтăр-çăтăр туса ыратать. Кун пек пулмасть, мĕнле те пулсан хăтăлмаллах тимĕр çăра тыткăнĕнчен», — шухăшларĕ вăл.

Вара мĕн пулать те мĕн килет тесе пуçне хыçалалла карт туртрĕ — чĕлхи хĕртнĕ тимĕр перĕнтернĕ пек çатăртатса ыратса кайрĕ.

Витя кукленсе ларчĕ те çăварне икĕ аллипе хупларĕ. Эх, ыратать! Эх, ыратать! Ача çăра çине пăхрĕ: вăл юнпа пĕвеннĕ. Арçын ача сурчĕ те — шурă юр юнпа хĕрелчĕ.

Çăра тыткăнĕнчен хăтăлнăскер нумай шутласа тăмарĕ, пӳртелле вирхĕнсе кĕчĕ. Ним тăвайман енне витререн пĕр курка шыв ăсса илчĕ те туххăмрах ĕçсе ячĕ. Çăварне кăмакаран кăларнă кăмрăк хыпнă пекех çунтарать. Вăт инкек!

Ку мыскара хыççăн Витя икĕ эрнене яхăн вĕри тата хытă апат çиеймерĕ. Сивĕннĕ шӳрпе лĕрплеттерсе, чей тата сĕт ĕçкелесе пурăнчĕ.

Ваттисем: «Кашни шăтăка сăмсуна ан чик», — тенĕ шахвăртса. Чĕлхене те пĕлмен япала çумне перĕнтермелле мар çав. Сивĕ тимĕр çумне — пушшех те!



# Эрешмен карти

Хĕвеллĕ ăшă кун Çеруш пахчана тухрĕ. Мунча патне çывхарсан тем нăйăлтатни илтĕнсе кайрĕ. Шăна сасси кăна мар ку, чылай хулăнрах. Мунча пĕçмехĕнче эрешмен картине вĕлле хурчĕ урисемпе тата пĕр çунаттипе çыпăçса ларнă иккен, хăтăласшăн тапаçланать, нуша курать. Сакăрураллă хура эрешменĕ ун патĕнчех. Тыткăнри тапаçланма чарăнсанах çывхарать вăл. Пĕр-икĕ урипе вĕлле хуртне «кăтăкласа» хускатать те хăвăрт чакать. Леш вара каллех тапаланать-нăйлатать. Çапла майпа эрешмен хăй сурчăкĕнчен тунă çиппisемпе çыхлантарса ун вăйне пĕтересшĕн хăтланать. Лешĕ ывăнса халран кайсан, вăйĕ пĕтсен ун ăшне сăннине чикет те наркăмăшне ярать. Кайран вĕлле хурчĕн ирĕлнĕ-шĕвелнĕ ăш-чикне пăрăх евĕр сăннипе туртса илет. Çапла апатланса пурăнать эрешмен.

Анчах кунта тытăçу вĕçленмен. Вĕлле хурчĕ çаврăнкалать, çыхланать, тапаланать, парăлтаттарнă сасă кăларать, сывлăша хускатать. Сакăр уралли икĕ мăшăр çунатлине хăвăртрах вăйне пĕтерсе сăннине чикесшĕн хăтланать. Вĕлле хурчĕ пĕр енчи икĕ çунаттине хăтарчĕ кăна — тепĕр мăшăрĕ тыткăна лекрĕ. Халь унпа вĕçĕмсĕр çатталанать. Эрешменĕ вăл хăвăртрах ывăнтăр, чăмран кайтăр тесе пыра-пыра урисемпе асăрханса тĕккелет, сăтăркалать, унтан каялла чакать.

Акă вĕлле хурчĕн икĕ мăшăр çунатти те çыхланса ларчĕ! Çакна эрешмен сисрĕ те йĕри-тавра чупкалама пуçларĕ. Сăннипе чикме меллĕ самант шырать. Анчах лешĕ вăйлă тапаланнипе май тупаймасть. Вăт амак! Эрешменĕ вĕлле хуртĕнчен пĕчĕкрех, пурпĕр тытасшăн ăна.

Эрешмен картин çурри арканчĕ ĕнтĕ. Вĕлле хурчĕ унăн пĕр пайĕ çинче çакăнса тăрать, вĕçĕмсĕр тапаланать. Хăвăртрах хăтăлмалла унăн ку вилĕм серепинчен.



Эрешмен шав чупкалать, кӗрешӳ вӗҫленсе пырать тесе шутлать ахӑртнех. Ҫак вӑхӑтра тапаланакан пыл хурчӗн пӗр енчи ҫунаттисем вӗҫерӗнчӗҫ. Вӑл хытӑ ҫатталаннипе хӑй те енчен енне силленме пуҫларӗ. Тепӗр самантран эрешмен картинчен хӑтӑлчӗ те пӑр-р туса чечексем ҫийӗн вӗҫсе кайрӗ.

Эрешмен вара нимсӗр юлчӗ. Ҫитменнине, ун картин ҫипписем те таткаланса пӗтрӗҫ.

Вӑт ҫапла: ҫав тери тӑрӑшса тапалансан темле йывӑрлӑхран тухма та, теме ҫӗнтерме те пулать. Инкекре алла лаштӑр усмалла мар кӑна.

Ҫеруш ҫакна хӑй курса ӗненчӗ.



*Литературно-художественное издание*

Для детей младшего школьного возраста

**Ларионов-Йёлмел Николай Николаевич**

# Вут хӳре
# Рыжий хвост

**Рассказы**

*На чувашском языке*


Редактор *О.М. Иванова*
Художник *Н.А. Васильева*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректор *И.Н. Фомина*
Компьютерная верстка *Е.Л. Карпеевой*

6+ Информаци продукцийӗн палли
(436 № ФЗ. 29.12.2010).
Знак информационной продукции
согласно ФЗ от 29.12.2010 г. № 436-ФЗ.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Подписано к печати 07.09.15. Формат 84×108 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 3,36. Тираж 1000 экз. Заказ № 487. Изд. № 99.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Мининформполитики Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ООО «Чебоксарская типография № 1»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

50.00

Чăваш
кĕнеке
издательстви

ISBN 978-5-7670-2418-6